**Ушкăн-ушкăн çĕкленсе...**

Ушкăн-ушкăн çĕкленсе

Курăнми хум хумханать;

Пĕр çилсĕрех чўхенсе

Мана килсе хупăрлать.

Ушкăн хума сирмешкĕн

Мĕнле сăвă юрлăп-ши?

Хама канăç кўмешкĕн

Кăмăллă хĕр тупăп-ши?

Ушкăн хума сирмешкĕн

Салху сăвă юраймĕ;

Мана канăç кўмешкĕн

Савман сар хĕр юраймĕ.

Аслă тикĕс çаранта

Йăлтăр çутă çеçке пур;

Чух çутă хĕр çавăнта,

Кам курасшăн - кайса кур.

Чух çутă хĕр савăнса

Çеçкесемпе вăй вылять;

Савни пырсан çаврăнса

Куçран пăхса йăл кулать;

Хĕрĕн лăпкă куçĕнче

Нумай сăмах каласси

Мана пăхсан палăрать;

Пур савнисем хушшинче

Çав хĕр мана юрасси

Ман ăшăма пусарать.

Çапла канлĕ сăнăмпа

Пĕр-пĕр тĕле таянса
Уççăн-уççăн шухăшлап
Е хĕрӳллĕ ăсăмпа
Тĕнче тавра çаврăнса
Çĕнĕ шухăш пуçтарап...

[1902]

*Турхан, Х. Ушкăн-ушкăн çĕкленсе ... / Х. Турхан // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 25.*